„Канаш“ хаçат çумĕнче тухат.

Науккăпа техникка.

Тем те шухăшласа кăларĕ науккă! Ваттисене çамрăклатаĭ, чăхăран автан тăваĭ, автанран чăхă... Йулашки вăхăтра тата—майрасем арçын пулма пуçларĕç. Арçын пиншаксем тăхăнса йараççĕ çӳçĕсене шакла кастарса йараççĕ, автан хӳреллĕ шлепкесем выранне, арçын картусне тăхăнаççĕ,—ак пулчĕ те арçын! Анчах пĕтĕмпех арçынлайманха. Тулашĕнчен пăхсан арçын та, шалтан... хĕрарăмах. Чăхăран автан тума пултарнă науккă, хĕрарăмран та арçын тума пултарĕха.

Анклире чăхăсăрах çăмарта тăваççĕ. Вăл çăмарта вара нихăçан та пăсăлмаĭ, тет. Пирĕн чăваш хушшинче тата—хуртланса кайнă аша та (какай) шăршă кĕмелле мар тума пултараççĕ. Ăна шухăшласа кăлараканĕ Кочетков йатлă кăлпаси туса суттăваканскер. Вăл Укашри (Йетĕрне уйес) выҫăх хвершăлне, Çлепов Тмитри Павăлча, çур пăта йахăн кăлпаси укçасăрах парса йараĭ те, вилĕ ашран тусан та, кăлпасси шăршлă пулмаĭ, тет. Чăнахши вăл? Чăнах пулсан, çавăн пек усăллă йапала шухăшласа кăларнăшăн ăна премии памалла пулаĭ. Анчах Тмитри Павăлчă хăй шухăшласа кăларни çинчен никама та каласшăн мар, тет, мĕскĕн! (хам пулсăн ун çинчен такçанах хаçатра çыртармалла).

Арфиметиккă тейекен наукка Кармаҫ-кассисем (Сĕнтĕр вул.) лайăх пĕлеççĕ иккен,—çĕнĕ терминсем те шухăшласа кăларнă вĕсем. Пĕрре çавсем çĕр танаштарма тытăннă. Çĕре йĕритавра пĕр хут çаврăнаççĕ, ик хут, виç хут...—Çĕр çитеймест. Мĕн тăвăн? Йумăçа кайсан та татти—сыппине тупаймăн. Темиçе уйăх çĕр çывăрмасăр шутласан çапла постановлени йышăнаççĕ: килре 1 çын пĕчен пурнаĭ пулсан, ăна 2 çыншăн çĕр парас, 2 çынна 3 çыншăн, 3—4-шăн, 4 çынна 4-шăн, 5 çынна 5 çыншăн, 8 çынна 7-шĕн, 9 çынна 8 çыншăн. (пĕрри çав çавах вилет терĕç пуҫ). Чаплă Архимет пуçĕ те çавна шухăшласа кăлараймĕ. Курни çавăн пек пуçсем тĕнчере!

Купеш—Тенире (Елĕк вул.) йалсовет пуçлăхĕ Петр Тимофейĕв „йĕм кăвакартмалли емел шухăшласа кăларнă. Вулăсран йалсовет кĕнчĕлери ваҫҫи илсе килнĕ кранташсене вăл пурне те вĕри шыва йараĭ те, кĕпе-йĕмĕсене кăвакартса тăхăнаĭ.

Каликрафи текен науккă... науккă мар, искусствă пур. Вăл хитре çырма вĕрентет. Çав искусствăна Курнавăш вулăсĕнчи Нĕркеç йалсовет членĕ, Уртеми Йăван Мĕтри, лайăх вĕренсе çитнĕ мĕн. Вăл ăхтă çине ал пуснă чухне, кашни çырнă саспаллишĕн пĕрер стакан „хамăр хăвалани“ ĕçет. Унсăрăн ал чĕтрет, çыру хитре пулмаĭ, тет. Ах, хăйамат! Вăл емеле сыснана ĕçтерсе пăхтарас. Сысна та хитре çырма пултарĕха ăна ĕçсен!

Йăван-мучи.

Телей пулмарĕ.

Хулари кооператтивсенче кĕтĕсле тавар илме пит йĕ вăр (Ĕçкорсен çырăвĕсенчен).

Макаçăна тавар илме пынă çын кĕрчĕ. Анаслаcа тăракан прикашчăк кăртах сикрĕ.

— Мĕн кирлĕ-с?

— Пушмакчĕ мана. Çул çинче çĕтĕлсе пĕтрĕ, çĕнĕ туйанас терĕм те...

— Иртен-çÿрен çын еппин есĕ? Апла пулсан çичас. Çак йураҭи уруна?

— Ну-кă, кăтартха. Çук, ку йурамасҭ. Малтан ыйтамха сиртен: слушăшчисене кĕтесле пама пултараттăри?

—Мĕ ĕн? Кĕтесле? Паратпăр. Ма парас мар? Ак, çакна тăхăнса пăхха...

— Фу, пит начар ку тавар. Хакĕ мĕн чул?

— 21—20 тенкĕ.

— Хакĕ те ытла хаклă. Епĕ ку хулара ĕçлеместĕп, анчах...

— Ниçта та ĕçлеместĕн. Апла пулсан çак мăшăра тытса пăхха, тен йурăхлă пулĕ.

— Ку мăшăр лайăхрах. Кăна тăхăнса пăхсан та йурамалла.

— Епĕ кунта слушит тумастăп та, шăлăм картăчкипе кĕтесле илсе пăхас терĕм. Шăлăм кунта ĕçлесе пурнаҭ те. Тăхтăрха, ма васкаттăр? Епĕ тăхăнса та пăхаймарăм. Ку мăшăр ман урана йурăхлă, каснă-лартнă...

— Çук, йурамасҭ. Куçу йăнăш курнă. Тем каласан та, уруна хĕсеççĕ вĕсем, тепĕр мăшăр кăтартса пăхам. Ак...

— Мĕн хăйаматла, каллех пули пулми тавара сĕнетĕн!..

Виçсе те пăхмастăп. Урăххине, лайăхрахне тупса пур. Шăлăмран талон илес терĕм те, ун çук пулчĕ талон. Ирĕксĕрех.

— Талонĕ пулмари? Аха! Апла пулсан виçсе пăхма йураҭ.

— Ку мăшăр тăвăр пулаҭ темерĕни çак есĕ? Халĕ ăнах параттăр.

— Çу-ук! Ку вăл мар, урăххи.

— Урăххи пулсан, урăххи пултăр. Мĕн çинчен калаттăмчĕха епĕ? Та! Шăлăмăн талон çук, терĕм. Çавăнпа унăн йулташĕнчен илмелле пулчĕ. Мĕншĕн туртатăн пушмака?

— Çук, ку сана йурамасҭ, хĕсекен пулаҭ.

— Çук, ним те хĕсмеççĕ... Çавăнпа епĕ кĕтесле илесрен пăрăнтăм. Пушмак мĕн вăл-ĕне мар. Хаклăрах пулсан та илĕпĕр-илĕпĕрех терĕм. Çирĕппине илсен пĕрик çула та çитĕ-çитех.

— Чăнах та, хĕсмест пулмалла. Ил еппин, тăхăнса ыр кур.

— Çапла çав. Кÿрха, тÿрех ăна тăхăнса йарам. Киввине хутпа чăркаса пар.

— Илтетĕп. 17 тенкĕ те 50 пус касса тÿлемелле.

— Мĕншĕн касса? Манăн кĕтесле тавар илмелли картăчкă пур.

— Иш...ех...ик...

— Мĕн пулчĕ сана? Ма сулкаланан? Кăравул! Прикашчăк тăн-тон тусă кайса ÿкрĕ... Пулăшăр! В. Артов.

Чăрмантаракан йапала.

— Сана епĕ саватăп,—качча илетĕн. Мăшăрлансан епĕр пит телейлĕ пулмалла. Ача-пăчасем пулĕç. Чунăм савни, кил ыталаса илем!

— Мĕн...

— Ăçталла... ăçтала? Тарма шухăшлатăни? Çук, тараймăн.

— Анчах...

— Çураççам ĕнтĕ манпа. Тархасшăн пыр мана качча.

— Анчах... епĕ арăм пулма пултараймастăп.

— Мĕншĕн? Урăх çынна йуратса пăрахрăни мĕн?

— Çу—ук...

— Чирлĕи мĕн апла есĕ?

— Çу—ук...

— Усал тăшман пирĕн çул çине тăрасран хăратăни мĕн, йе хăвăн кайăс килмĕсти?

— Çу—ук...

— Тĕфу! Мĕн чăраҭха сана ман арăм пулма?

— Вунна анчах кайнăçке еп, мучи!..

ПИЧЕТСЕМ.

Сала вулăс çынни иккенне ĕненте-рес тесен, çавăн пек пичет çапма сĕ-нетпĕр епĕр вулăсри пур краштăнсен çамкисем çине те. Мĕншĕн тесен унти çынсем пичет пусман пулсан нимле хута та ĕненме пăрахнă.

Çав вулăсри „капкăна“ пĕр çыру килсе ÿкрĕ. Кĕскен каласан çырăвĕнче çапла çырнă:

Епĕ Шупашкара кайрăм. Унта çав çынпа курса калаçрăм. Унтан Мускава кайрăм. Мускавра тепĕр çынпа калаç-рăм. Мускавран таврăнсан татах Шу-пашкара кайрăм. Унта тата калаçрăм. Шупашкартан киле таврăнтăм. Киле таврăнсан татах Шупашкара кайрăм. Тата калаçрăм,. тата кайрăм, тата, та-та, тата....

Çырăвĕн нуçламĕшĕнче пичет:

Вĕçĕнче...
татах пичет:

Пуштă пичетĕ йепле майпа çаклан-нине пĕлместпĕр, анчах йулашки пи-четне пусаканĕ çакна ĕнентерет:

„Ма Мартыновски сел. сов. удост. на двух ексемплярах о том что Митрова-нова (çыруне çыраканĕ) в кармане на-ходится... что и удостоверяется с под-писи и печати.

За Предсельсовет. (кам тесе шу-хăшлатăр?) сын пред. А. Павлов.

Çак çырăва вуласа тухсан „Капкăн“ çапла каларĕ:

„Пичетсене йепле тыткаламаллин хăйĕн саккунĕ пур, анчах Куславкка-ри пуштă начаљнĕкĕпе Йĕршер йалсо-вечĕн претçетаттĕлĕшĕн саккун çырă-найман пулмалла. Çавăнпа вĕсене ça-кăн пек пичетсем туса памалла:

Патман.

Ача ашшӗ.

Лектерсе лартнӑ Ухваниҫ Йӑванча сутра. Ӑна ача ашшӗ, тенӗ.—ачине тӑрантарса усрама Ухвиниҫ Йӑванча хушнӑ. Халӗ ӗнтӗ кашни уйӑхрах ун шалунчен виҫҫӗмӗш пайне катса йулса ҫав ачан амӗшне памалла пулаҫ. Хуйхӑраҫ, хуйхӑраҫ Ухвиниҫ Йӑванчӑ, —нимӗн тумалли те ҫук.

— Пӗчӗкреннех епӗ кипкери ачасене йуратмастӑпчӗ, курсанах хӑсас килетчӗ.—Урисемпе тапаланаҫҫӗ, кӑшкӑраҫҫӗ, сунаслаҫҫӗ. Ман кипкене те варалама пултараҫҫӗ вӗсем. Ҫав йурӑхсӑр ачанах тӑрантарса усрамалла пулаҫиха ман? Кун пек телейрен чире йерсе кайма та пултаратӑп епӗ.

Сутйӑана епӗ тӳрех каларӑм:

— Кулӑшла, теп, йулташ сутйа. Кулсах вилмелле ку ӗҫрен.

Ҫавӑн пек пӗчикҫӗ ачашӑнах шалун виҫҫӗмӗш пайне парса тӑр. Мӗн тӑваҫха вӑл укҫапа? Вӑл чӗлӗм туртмасҫ, ерех ӗҫмест, картла выҫамасҫ, мӗн тӑваҫха вӑл шалупа? Чирлесе кайма та пулӗ ун пекех пулсан. Тупата.

Сутйа калаҫ:

— Ачи ҫинчен мӗн шухӑшлатӑн есӗ? Санӑнни вӑл, йе сан мари?

Еп калатӑп.

— Тӗлӗнмелле сан сӑмахусенчен, сутйа тус, тетӗп.—Ӑҫтан ман пулма пултараҫ вӑл? Пӗлетӗп, епӗ—кам ман ҫинчен елеклесе кӑтартнине. Пӑраскки мурӗ, ман укҫана ҫаклатасшӑн! 32 тенкӗрен 10 тенкӗ те 75 пусне ҫав Прасккийа парса пыма еп ухмах мар. Унӑн ман ҫӗтӗк—ҫатӑк ҫӳреси? Ҭфу! Ун пек мӑшкӑла тӳсме хӗн, тетӗп.

Сутйа калаҫ:

Ачи санни, сан мари тетӗп, тет.

Еп калап:

— Шуйтан пӗлет—кам ачине «ҫав-ҫав ҫын ачи» тесе ун ҫамкки ҫине ҫырса ҫапман, вӗт.

Ман мар пуҫ тетӗп.

— Теҫ саннах пуҫ, аса илха, тет каллех сутйа.

— Аса илейместӗп, тетӗп—, аса илме те кирлӗ мар.

Ун пек аса илнисемпе епӗ чирлеме те пултаратӑп.

Праскки ҫинчен мӗн калас? Пӗрре вӑл ман хваттере пынӑчӗ, тепре пасарта тӗл пултӑмӑр. Тутӑр илсе те панӑчӗ еп ӑна. Анчах ҫав ачашӑн укҫа тӳлесе тӑма пултараймастӑп. Ан та ыйтӑр...

— Апла пулсан, ачине пӑхӑпӑр. Кам сӑнлӑ пулнӑ вӑл ача?

Праскки, ҫӑва тӗпне кайманскер, кипкепе чӑркана ачана салтаҫ, кӑтартаҫ. Сутйа пӗрре ача ҫине пӑхса илчӗ, тепре ман ҫийе пӑхрӗ те, калаҫ:

— Сӑмси санӑнлах, тет, — каснӑ лартнӑ сан сӑмса.

Еп калап:

— Чӑнахта! Сӑмси ман пуҫ те, ытти йапалисем ман мар, тетӗп.—Сӑмсишӗн 3 тенкӗ, йе 3 тенкӗ ҫурӑ тӳлеме хатӗр. Ытти йапалисемшӗн виҫӗ пус та тӳлеместӗн, мӗншӗн тесен епӗ сарӑ ҫын, ку хӗпхӗрлӗ. Хӗрлӗ йапалашӑн виҫ тенкӗ тӳлеме пултараймастӑп. Мӗн тумалла ун укҫапа: ерех ӗҫмест, чӗлӗм туртмасҫ, картла выҫамасҫ, арӑмӗ ҫук.

— Сӑмси санӑн пекехҫке, тет сутйа.

— Ҫынна сӑмсаранах палламалла мар, тетӗп.—Сӑмси манӑн йевӗрлӗ те, анчах шӑтӑкӗсем манӑн пек мар,—пӗчи-икҫӗ. Ман сӑмса пӗчӗк шӑтӑклӑ марҫке? Ҫавӑн пек пӗчӗк шӑтӑксемшӗх пӗр тенкӗрен ытла тӳлейместӗп, тетӗп.

Праскки ҫавӑнтах йӗкӗлтетсе тӑраҫ:

— Ачи хӗрлӗ пулнӑшӑн та еп айӑплӑ мар, тет.—

Теҫ пуҫнитсӑра такам ӑна улӑштарса кайнӑ пулсан... Вӑл чӑн-чӑнах малтан сарӑчӗ. Такам улӑ тарса кайнӑ? Малтанхи—ашшӗ сӑнлахчӗ, тет.

Аккушерккӑна чӗнсе килеҫҫӗ.

— Пуҫнитсӑра хаҫ ҫуралнӑ ачасене улӑштарса кайакансем пулаҫҫи, тесе ыйтаҫҫӗ унтан. Вӑл:

— Пулмасӑр. Тӗм те пулма пултараҫ. Хӑш кун пӗр 80 хӗрарӑм ытла пуҫнитсӑра ача ҫуратаҫҫӗ те... Кашни ачана хӗртнӗ клемепе нусса пал туса пыма пирӗн вӑхӑт та ҫук, тет.

— Лешӗ, сарри ман пулнӑ, ку манӑн мар. Ман ачана такам улӑштарса хайнӑ та, халӗ нимӗн те тӳлеместӗп... Тӑрса ывӑнтӑм, кайма йуратӑн, тесе ыйтатӑп сутйаран.

Сутйи:

— Тӑхтаха, приккӑвӑр вуласа кӑтартӑпӑр, тет.

Вуларӗҫ. Ман шалуран виҫӗмӗш пайне тытса пырса Прасккийа парса тӑмалла турӗҫ. Сути вӑл?.. Мӗншӗн ҫуралнӑши ҫав шуйтан ачи? Кӗпине уҫсах хӗнемелле ун пек ачасене.

Пекемот.

Усал ҫынпа ҫыхланичен упапа ҫыхлан.

Итимер Йӑванӗ чӑпта ҫапнӑшӑн укҫа илнӗ те, укҫине ҫул ҫинчех шутласа пырат.

— Ку—тет,—пулӑ илме, кунпа пӗчӗк ачам ваҫҫи вӗтӗ кӗрпе илес, тепӗр уҫӑри вак укҫасемпе килтисем ваҫҫи кученеҫ илсе парас, йулашкипе тутлӑ шӑршӑллӑ супӑҥ илсе арӑма хӗпӗртеттерес. Ӗҫмеллӗх йулмасӑ те... Ну, йурӗҫке. Ӗҫме пӑрахас пайӑнтан малалла, тет.

Киле кӗрсе тухас те хулана вӗҫтерет. Хула 5 ҫухрӑмра ларат.

Ҫитет хулана. Ҫул ҫинче сӑра хупахӗ ларат. Вывӗски пысӑк. Вулама тытӑнат (хут пелнӗ мӗн мӗскӗн): «Т-ай вӑ-сӑ-ой-ту», тенӗ.

— Хуг пӗлмен пулсан кӑна та вуласа тухас ҫукчӗ. Вӗренни—ҫутӑ, вӗренменни тӗттӗм, тесе ахаҫ каламан ҫав ваттисем. Ку «кӗрсе тухас» тени пулат. Чӑнах та кӗрсе тухас мари кунта? Ҫын пӗр ҫӑкӑрпа анчах пурӑнаймасӑ, тет.

Кӗрет. Рӳмккин йатлӑ йулташне тӗл пулат. Рӳмккин хӗпӗртенӗ Йӑвана курсан.

— Ӗҫетпӗр, ерттелпе, тет Рӳмккин алӑ ҫупса илсе.

— Ерттелпе пулсан йурат. Хам та трутовой ертелте ӗҫлетӗп те, ерттеле йурататӑп.

Ианклаттараҫҫӗ пӗрер стакан.

— Ак, хӗрли те пур, советски...

— Хӗрлӗ йапаларан пӑрӑнмастӑп. Епӗ хам та...

Ӗҫрӗҫ, ӗҫрӗҫ те, Рӳмккин калат:

— Халӗ ӗнтӗ тӳле, тет.

Тӳлерӗ.

— Арӑм пӗтерет ӗнтӗ мана куншӑн, тет.

— Арӑмунтан хӑратни? Ах, ухмах! Арӑму йатлаҫма тытӑнсан, вӑрҫса ил ӑна. Арӑмран хӑрамаллаи?

Ҫитет киле.

— Епӗ сан ваҫҫи супӑҥ илеймерӗм. Рӳмккин тӗл пулчӗ тет...

— Ах, мурилешшӗ, тет арӑмӗ,—каллех ӗҫсе йатӑни? Намӑса пӗлесчӗ...

Рӳмккин каланине аса илчӗ те:

— Арӑм, тет хыттӑн Йӑван,-сан ӗҫ ҫук!

— Ман алӑра 4 ачам пур, вӗт...

— Урайне антарса йар!

— Вӗсем манран ҫӑкӑр ыйтаҫҫӗ.

— Есӗ вӗсене пушӑпа ӑшала.

— Кӗлет сутнӑ укҫана та ӗҫсе йатӑн...

— Епӗ ӑна услам тӑвас тесе сутнӑчӗ

— Ҫитменнине тӳшеке те саклата хутӑн.

— Вырӑн ҫинчен иртерех тӑрӑн.

Ним каласа витермелли те ҫук Йӑвана. Арӑмӗ ӳсӗрскере вырӑн ҫине выртарат те, аттине хывса шкапа питӗрсе хурат.

Ир тӑрсан Йӑван куҫанат, арӑмӗнчен каҫару ыйтат.

— Каҫар мана! Ҫав усал ҫынна тӗл пулман пулсан, ман укҫа та пулатчӗ... Ерех ӗҫме пӑрахӑп. Малашне ҫӗнӗ пурнӑҫпа пурӑнма пуҫлӑп, тет Йӑван тархасласа.

Пӑрахи вӑл ӗҫме, пӑрахми? Пӑрахмасан «Капкӑнра» каллех ҫырӑпӑр.

Ҫавах.

Ӑҫта кайан, шӑрттан тус?!

(Йуптаруллӑ калавран).

„Чӑвашӑн шӑрттанӗ авалхи ҫимӗҫ. Ӑна чӑваш ахаљ парсан парӑт анчах сутмаст. Ҫавӑнпа та ӑна хулари лавкасенче тупма ҫук. Вырӑнта ларакан чӑвашсем шӑрттан тума киле саккас параҫҫӗ, мӗншӗн тесен“...

(Чӑваш историкӗн сӑмахӗ).

„Чӑваш шӑрттанӗ питӗ тутлӑҫке, нимла кӑлпасирен те йулмаст“.

(Шӑрттана тутанса пӑхнӑ вырӑс).

„Темшӗнҫке ҫакӑ Чӑваш автономийӗ хӑйӗн ҫимӗҫӗсене тавар тума хӑрат. Унӑн хӑйӗн шӑрттанӗ лайӑх, усрама та калкал, ҫимӗҫ иккенне пӗтӗм Совӗт ҫӗрне пӗлтерсе, унпа тупӑш курмалла“.

(Шупашкар шӑрттанне ҫисе чутах вилменскер).

„Лат шӑрттанах ҫав хӑш хӑш портфӗлӗ! Пӑнкӑ пӑнкӑ тултараҫҫӗ“.

(Пионер сӑмахӗ).

„Портфӗлӗ йышлансах кайрӗҫке, пур утайманни, тӑрайманни пурте портфӗл йӑтаҫҫӗ. (Паллах, портфӗллисем утаҫҫӗн—вӗсене турттарса ҫӳреҫҫӗ, столовӑйсенче ӳксе тӑрайми пулакан портфӗл те пур)“.

(Йалти сӑмах).

„Портфӗл ӑшне шӑрттансене чиккелеҫҫӗ, шӑрттан кӑмӑлне хӗрарӑмсене портфӗл паракансем те пур. Шӑрттана портфӗл парашшӑнсем пурши?

(„Капкӑн“).

„Шӑрттанпа портфӗл пӗр йевӗрлех. Икӗшӗ те сӑран питлӗ. Шӑрттан нумай пурӑннӑҫем, усрама пӗлмесен, йе йурӑхсӑра тухма култарат, йе ӗҫнӗсем ӑна хыпса ҫӑтаҫҫӗ. Портфӗле те кивелсен кӑларса ывӑтаҫҫӗ (хӗвеланӑҫӗнче), йе вӗсене столовӑйсем пушатаҫҫӗ (Шупашкарта).

(„Економис“).

„Шӑрттан ӗҫне кооператтив аллине пама ҫук пулӗ, тепӗр кооператтив ыйткалан пекех ҫав—темиҫе хут хулана хутаҫ ҫакса кайат те, йе нимӗн те илсе таврӑнаймаст (Чӑвашпай сутти те кивҫен памаст, тет), йе ҫул ҫинче хутаҫне пушатакан претҫетаттӗлсем тупӑнаҫҫӗ.

(Копператтӑр).

„Ӗҫ пайӗн пӗр портфӗлӗ (ҫекреттар) халӗ пушшех ҫӗтӗлсе пырат. Вӑл укҫа тенкӗ отчочӗ вырӑнне сталовӑйӗнче кулленех (ӗҫ вӑхӑтӗнчех) литтӑр шутлат“...

(Каҫхи хыпар).

„Ӗҫсӗррисем нумайлансах пыраҫҫӗ“...

(Аптӑранӑ кӑвакал).

„Чӑвашвӑрмантресчӗн шӑрттанӗсем вӑрман ҫук ҫӗрелле (хирелле ытларах ҫӳреҫҫӗ: лашисем йе тыр вырма, йе Миллисене ӑсатма кайаҫҫӗ“.

(Вырӑнти хыпар).

— Йурйӗв мототсиклечӗ Шупашкар хушшинче ҫурӑлса кайса икӗ карчӑка персе ӳкернӗ.

(Вырӑнти хыпар)

— Шупашкарти нӗртен пӗр автомопиле ачасем ҫинче ҫуптара пуҫланӑ. Комунхос чулӗсем ҫинче урапи шӑтасран хӑранӑ.

(„Йӑван Мучи“ шӑрттанӗнчен кӑларнӑ хыпар“).

— Ӑҫта кайан, шӑрттан тус,
шӑрттан тус?
— Питпе хула йеннелле,
йеннелле.
Портфӗллисен кассине,
кассине.
— Мӗншӗн унта кайатӑн,
кайатӑн?
— Автономлӑ правапа,
правапа.
Хама хула шырама,
шырама.
— Мӗн сӑлтавпа кайатӑн,
кайатӑн?

— Ӗç шыраса пӑхас, теп,
пӑхас теп.
Портфӗлленсе курас теп,
курас теп.
— Йе йал йышӳ йамасан,
йамасан—
Расрешени памасан,
памасан?

— Кӑмакаран тӗп тӳрех,
тӗп тӳрех.
Кӑмакари хӗрӳпех,
хӗрӳпех
Мӑрйеренех тухас, теп,
тухас теп.
— Пӗрпӗр чӑваш тӗл пулсан?
тӗл пулсан?
«Йал йеннелле!.. кӑтартсан,
кӑтартсан?
— Сикӗп кӗрӗп çул çинче,
çул çинче
Копперагтӑр—хутаçне,
хутаçне.
— Унта та май тухмасан,
тухмасан?
Вӑл хутаçне пушатсан,
пушатсан?
— Тухса тарӑп çулпала,
çулпала,
Хуса çитӗп стутента,
стутента
Кӗрӗп рапфак сумккине,
сумккине,—
Унпа паткӑ савӑтне,
савӑтне.
— Унта мӗскер тӑватӑн,
тӑватӑн?
— Вӑл савӑтре ӗç шырӑп,
ӗç шырӑп,

Рапочине çырӑнӑп,
çырӑнӑп.
— Унта тӳрех кӳртес çук,
кӳртес çук,
Çитменне ӗç пулас çук,
пулас çук.
Выçӑ стутент аллинче,
аллинче
Шӑл хушшине çаклансан,
çаклансан?
— Тупӑп шӑтӑк чӳрече,
чӳрече
Тухӑп вӗçӗп çул çине,
çул çине.
Сикӗп ӳкӗп пӗлӗте,
пӗлӗте
Йурйӗв мототсиклӗчпе,
сиклӗчпе.
— Йе ун кӗпçи шӑтсассӑн,
шӑтсассӑн?
Ывтӑнтарса йарсассӑн,
йарсассӑн?
— Автомопиль çуки мӗн,
çуки мӗн?
Еп ун çине ывтӑнап
ывтӑнап,
— Унна та ӗç тухмасан,
тухмасан?—
Вӑл ачана таптатсан,
таптатсан?
— Вӑрмантресчӗн çатанне,
çатанне
Еп паллатӑп тахçанах,
тахçанах.
Вӑл йалтахçке йаланах,
йаланах
Мана унна Ӗç пайне,
Ӗç пайне
Леççе йарӗç самантрах,
самантрах.
— Ӗç пай çыруç çук пулсан,
çук пулсан?
— Çук, тупатпах еп ӑна,
еп ӑна.
Леçтеретӗп пивнойа,
пивнойа.
— Мӗншӗн унта леçтерен,
леçтерен
Вӑл унтине ӑçтан пӗлен,
ӑçтан пӗлен?

— Вĕсем унтах пурнаç, тĕт,

Литтăрсене шутлаç, тет.
Пивнойра та çаклансан,
çаклансан—
Кăлпасси пек турасан,
турасан?
— Портфĕл ăшне вырнаçăп,
вырнаçăп
Ёçпай ĕçпе паллашăп,
паллашăп.
— Портфĕл шăтăк пулсассăн,
пулсассăн,
Литтăр пуçĕ курăнсассăн,
курăнсассăн?
РКИ куçĕ курсассăн,
курсассăн?

Есĕ хута çакланăн,
çакланăн.
— Проккурора систерĕп,
систерĕп,
Хам чыссăрне пĕлтерĕп,
пĕлтерĕп,
Мана унта хурлас çук,
хурлас çук.
Кăлпасси пек çĕрĕк мар,
Еп—çĕрĕк мар.
Мана çисен çын вилмест,
çын вилмест.
— Çын портфĕлне кĕнĕшĕн,
кĕнĕшĕн—
Айăплă шута ӳксессĕн,
ӳксессĕн?
Портфĕлленме тăнăшăн,
тăнăшăн,
Хапсăннăшăн çаклатсан,
çаклатсан?
— Пăлтăр-палтăр йăванкалăп,
Сутĕнчен те тухăп тарăп
Тарăп «Капкăн» лаççине,
Йăван Мучи çăварне...
Тевех чыссăр пурнаĭчен,
пурнаĭчен
Капкăнçăра еп вилем,
еп вилем.

Шăрттанçă Ваçанкка.

Кăмăллă йалканашĕ.

Чăваш авалхи йăлипе, киле йут çын нырса кĕрсен апатлантарса йамасан аван мар, теççĕ. Çак йалана 2-мĕш Хурамал йал канашĕ (Шăхасан вул.) пит те асăрхаса тăраĭ. Йала мĕнле те пулсан ĕçпе кам та пулсан пыраĭ пулсан, вăл çăмарта та пулин çитерсе йараĭ.

Акă илерха унăн 2-3 уйăх хушшинче тухнă расхучĕсене.

1. Вăрман мĕн чухлĕ кирлине сăнама килекен комиçси килсен 10 çăмарта илсе панă—35 пус.

2. Тĕрлĕ штравсене тӳлеттерме милитси килсен 10 çăмарта çитернĕ—35 пус.

3. Налок йĕркипе йал çписки çырма килекенсене 10 çăмарта, виç четвĕрг сăра илсе панă—1 т. 10 пус.

4. Уйра тырра пăр çапса сийен тунине тĕрĕслеме килнĕ комиççийе 2 тенкĕлĕх сăмакун, саккускăлăх 10 çăмарта илсе панă.

Ку расхутсем çулла чăхсем çăмарта тунă вăхăтра пулнă. Малашне кĕр мăнтăрĕпе 2-мĕш Хурамал йалканашĕ тĕрлĕ комиççисем килсен такасем, вăкăрсем пусса çитерме шухăшлаĭ, тенĕ хыпар пур.

Ратио-хыпарсем.

„Капкăн“ лаççинчи ратио пăралукӗпе тытăннă.

.. „Кашнă хаçатрах çӗнӗ х парсен уйрăмӗ пур. „Капкăн“-ра та çӗнӗ информатси уйрăмӗ уçăлаҫ. Хыпарӗсене ретаксири ратиоприйомнӗк илет. Пылчăк вăхăтӗн- че хыпар хутаççи çакса çӳрени мар пулӗ—ратиопах ӗçлес.

(Йăван Мучипа калаçнинчен).

— «Капкăнра» та телекрамсем çапăнаççӗ... Çӗнӗ ӗç!..

Сопор чиркӗвӗпе «Капкăн» лаççи хушшине икӗ пăралук карса хунă. Пăралукӗсем çапçарамасах. Вӗсенчен тата тепӗр пăралук çурă çакса йанă. Çак çакса йанă пăралукӗсене «атам кӗпипех» хăварасшăн пулман, кăкăр таранах угайалпа чăркаса выртарнă. Кӗрхуннеченех пӗр ӗççӗр выртса сиве шăнасран шикленнӗ пулас...

Пăралукӗсем çапах ӗççӗр выртмаççӗ иккен.

Пӗтӗм иртен çӳрен хыпар вӗсене çитсе çулăхаҫ.

Кӗçӗр «Капкăн» лаççинче пăралукӗ вӗçне çăвара хыпрăм та,—(мурилешшӗ!,,)

— Хыпар çине хыпар... илсе пӗтерме çук. Пӗтӗм Шупашкар пăралук тăрăх «Капкăн» лаççине туртăнаҫ... ем се илсе, сурса çитер.

Шупашкар пушарӗ.

Нимрен малтанах «Пушар» тенӗ сăмах пӗтӗм чӗре картине çитсе каплантарсах хучӗ. Пушар пулса иртни чылай. Çапах та... йанравӗ сывлăшрах. Пăралуксене сулласа ăнранах йанă. Чан çапнинчен хытăрах йанăраççӗ.

Ахалех мар пулӗ—итлесха:

— Пушар вăхăтӗнче халăхӗ—тăраканӗ тараҫ, тарманнисем—пушар çилхине пăйавпа ыватса тытасшăн. Пошарнăйсен кӗçси ӗлӗкхи авалхи Совнархос пушарне çӳнтересшӗн, ун тӗлӗнче хашăлтатса выртталарӗç...

Ӗлекки ӗçе аса илнӗ.

Сӳнтерме пыраканс ен насусӗ çеç мар, шăналăкӗ те, вут тӗлне тытмалли пиглӗхӗ те... Çӗтӗк-çатăк...

Пушарнăйӗсем?

— Пушарнăйӗсем ахаҫ чух килӗнче, çӗтӗке саплас вырăнне «Волною Морскою» йарса выртаççӗ. Унпа та чун уçăлаҫ, тата хӗрӳрех чунлă вăхăтра пушарла выҫҫаса пăхаççӗ. Вӗсем çутта йуратаççӗ те...

— Тăхтаха урăх
Хыпар. Аҫҫо!
— Майлă ӗçехи?
— Майлă, майлă...

Чăвашçутпай макаçăнӗ.

— Чăвашçутпайӗн (халӗ комиссар йачӗн) макаçăнӗнчен кӗнеке-хут таврашӗ тухса тарнă, тет те... Халӗ лавкине атам кӗпиллӗ хӗрарăм кӗлеткин ӳкерчӗкӗсем çутатса хунă. Такамăн та (кӗнеке илме пынисен) сăмса çунатти таврăнса çуталмалла...

— Аҫҫо!.. Камха? Ăçтан? Йерçӳ çук. Çутă çинчен пӗтмен...

— Пирӗн те çутă çинчен...

— Чăваш çут кăмиссар йачӗпе...

Айӗнчи макаçӗнӗ çутпайӗн мар тет те та. Çутăлăх ӗçне тăвакансем айӗнчех...

— Пирӗн хыпар... Епӗр те çутă çинчех.

— Турăсем Çлессарни овракa тарнă, тет вӗт.

— Ун çинчен кайран...

— Еппин...

Чăваш кӗнеки.

— Чăваш Кӗнеки Уйрăмӗн лавки вăкăр..., хăйамат, шăши куçӗ пысăкӗш шăтăка кӗрсе вырнаçнă. Кӗнеки тул тулли... Чăлханса ӳксе, аран тухкаласа утрăмçке.

— Урӑх ҫӗртре... тепӗр кӗгес кирлӗ мар теҫҫӗ мӗн?

— Ҫук, пӗлместӗп. Тӗм, леш, «Чӑвашпайсутти» текеннипе «Чӑвашкӗнеки» макаҫӑнсем: «Чӑвашсутти» йатлӑ кӗнеке макаҫӑнӗ, йе «Чӑваш йӳҫҫи» ваҫҫи?.. тесе перкелешеҫҫӗ, тет те.

— Йӑван Мучийе, йе шӑлнӗне?.. мӗн тума?, пур!..

Каллӑх таҫтан хыпалантараҫҫӗ.

Комунхос—сутуилӳ ӑсти.

— Комунхос сутуилӳ йӗркине пит ӑста пӗлекен пулса кайнӑ. Чӑвашӗҫтӑвкомӗ кама та пулин ҫурт травашӗ памалла тунӑ пулсассӑн, унӑн хучӗ ҫине ӗҫтӑвкома хирӗҫ Комунхос сутуилӳ кӗнекӗ ҫинчен лекси вуласа параҫ. Тата...

Йурӗ, йурӗ... Кам сутӑ тума пӗлменнисем Комунхоса кайса вӗренӗҫ.

— Ҫук, каламаллах... Комунхос хваттерсем пирки те ӗҫлет, токӑвӑрсене йава йава темиҫе хут сӳтет...

Ҫуллахи театӑрта.

— Кино пуҫлӑхӗ—Тӑрйаплӑв текенни ҫынсем ҫуталасран хӑраҫ...

— Вӑл Чӑвашклавҫутполитпроҫветри —Т. панӑ хутпа кино курма пынӑ ҫекреттар-курссантсене—10 ҫынна:

— Кунта пахатеҫнӑ мар, Пш-шо-лл! к ч..., тесе хирет...

Татах ҫутӑ ҫинчен.

Шатах ҫутӑ та ҫутӑ...

Авӑ ҫамрӑксен те уйавӗ вӑхӑтӗнче «ҫутта» ҫулелле кӑвакӑн—симӗсӗн пӗрхӗнтерни...

Тӳлевсӗр ҫпектаккӑҫ ҫинчен...

— Вӗсем иртнӗ... ҫӗнӗ хыпарсем ҫук-и?

— Каламаллах... Ун пек тума кирлӗ пулӗ те, чӑваш услови...

— Хӑйамат!.. Пӑралук тутаран вӗҫерӗнчӗ кайрӗ.

Челхепе ӗмсе ҫитерме ҫук. Те урӑх ҫӗрти пӑралук хыпарсене турта пуҫларе тем?..

— Еккей, ҫутӑ та ҫутӑ... Шлепкесем, кӗрхи калуш...

Арпус ҫинчен халӗ хыпар ҫӳрет пулӗ тесе... ҫук!

Ҫитмеллисем нумай.

«Ҫлессарнӑй овракне» ҫурранах лакӑштатса кайма тивет пулӗ. Унта, тата «Стари кора» тенӗ ҫӗрте пурнӑҫ вӑйлӑ... тетчӗҫ.

Тата Чӑвкӗнуйрӑмӗн аслӑ пух-ӗ тени ӗҫ вӑхатӗнчех савхус урайне выртса укҫа шутлани ҫинчен... Ҫӗнӗрӗн илнӗ слушӑшчисемпе киввисем:

«Пӗтӗм тӗнчери ӗҫме йуратакансем, пӗрлешӗр»! тенӗ лосункран ҫуртӑнса «емычкӑ» тума тытӑнни ҫинчен пӗлеймесӗрех йултӑм.

— Тепӗр чухне, ратио пралукӗсем туртӑнарах парсан лайӑхрах итлесе пулӗн?

Пӗрре шултра сасӑллӑ тӑрпах лартасха...

Танкӑ.

Пӗчӗк ачасен калаҫу.

— Ҫитӗнсен, епӗ салтака кайатӑп. Мана чиыв ҫинче ишсе ҫӳреме илӗҫ.

— Ӑҫтан хлота илӗҫ сана, есӗ шыв ҫывӑхӗнчи ҫын мар, вӗт. Унта шывра ҫӳреме вӗреннисене ҫеҫ илеҫҫӗ, тет.

— Ма епӗ шывра ҫӳреме пултаратӑпҫке. Хамӑр ҫырмари пӗвене кашни кун шыва кӗретӗп. Икӗ чалӑш тӑршӗ ишме пултаратӑп. Халӗ месерле ишме вӗрентӗм. Хоҫ те тем тесен те мана хлота илеҫҫех.

Утик.

Акитсутра.

— Каласа парха айӑпланакан Мирун: пӗр кунта есӗ миҫе перус туртса йаратӑн?

— Ҫӗртен кайа мар.

— Км... апла есӗ сахалран та ху ӗмӗрӳна 25% кӗскететӗн. Миҫе ҫулта ха есӗ?

— 52 ҫула кайнӑ.

— Ну, вот! Чӗлӗм туртман пулсан есӗ халӗ шӑп утмӑл пилӗк ҫулра пулатӑнчӗ!...

Ҫӑмарта мурӗ.

Ҫатрака ҫыраҫ:

Нурӑсри выҫӑх тухтӑрӗ Куҫмин Кушара пырса выҫӑхсене уккол туса ҫӳрерӗ. Уккол тунӑшӑн кашни выҫӑхран пӗрер ҫӑмарта пухрӗ. Мӗн мурӗ 200 ҫӑмарта пухса карӗ, тет.

Ҫӑмартаран пӑрӑнаканни пулмӗ ҫав. Хвершӑл мар, йӗке—хӳресем те ӑна йуратаҫҫӗ те, анчах йӗркесӗр ҫӑмарта туртакансем часах капкӑна лекеҫҫӗ, шереметсем.

«Червонтсӑ».

Соломон патша пит ӑслӑ пулнӑ, теҫҫӗ. Анчах Соломон ӑсӗ, хаҫхи усламҫӑсен ӑсӗсемпе танлаштарсан, нимӗн те мар.

Шаптӑкри усламҫӑ Каккӑр Кӗркури „червонтсӑ“ тапак крупкине пушатса урӑх, усал тапак, тултарса сутаҫ, тет Сӑпса.

Ҫавӑншӑн темиҫе „червонтса“ штрав тӳлеттерсен Каккӑр Кӗркури какӑрсах йарӗчӗ.

Руссалккӑ.

Авалхи чӑвашсем каланӑ тӑрӑх, мӑн шывсенче ҫурри пулӑ, ҫурри етем тӗслӗ хӗрарӑмсем пурнаҫҫӗ, тет. «Тет» тенине ӗненмелле мар та, анчах ун пек икӗ тӗрлӗ ҫынсем пурне пурах. Ав:

Шӑхасан вулӑсӗнчи Хурамал копператтивӗнче Шур Йакур Петӗрӗ прикашчӗкра та хӑйех лараҫ, ревиҫи комиҫҫинче те хӑйех тӑраҫ.

Вӑл ҫынна ҫурмалла татмалла, пӗр пайӗ прикашчӗк пултӑр, тепри ревиҫи комиҫҫи членӗ, вара хуларан пынӑ ревисорсем: пӗр ҫыннах икӗ ӗҫ пӑнӑ, теме пултараймаҫҫӗ.

Чаплӑ пӗлтеру.

Пысӑк хуласенче, тавар илекенсене астарама макаҫӑнсем ҫине електритсӑллӑ вывӗскӑсем ҫапаҫҫӗ, автомопилсем ҫинчен пӗлтерӳсем пӑрахса ҫӳреҫҫӗ. Пирӗн чӑваш хушшинче урӑхларах.

Шӑмат копператтивӗ (Йет. у.) йалти йармӑркка йероплан, тата трактӑр килет тесе кӑшкӑртнӑ. Уҫпени кун халӑх йармӑркка пит нумай пухӑннӑ, трактӑрпа йероплан курма. Анчах йармӑрккинче йероплане те, трактӑрӗ те пулман. Халӑх пӑшӑрханнӑ.

Куҫ улшӑнни.

Кипнотисӑм йатлӑ наукӑ пур. Вӑл наукӑ тӑрӑх, ҫынна мӗн тума кушан ҫавна тӑваҫ, шур йапалана хура тесен, ҫын куҫне шур йапалах хуран курӑнаҫ. Ун пек тума ҫынна пӗрпӗр ҫутӑ йапала ҫине пӑхтараҫҫӗ малтан.

Патӑрйел уйесӗнчи финанс пайӗнче ӗҫлекен Шветсов Петр Шупашкара килсен ҫуттине ӗҫсе ӳсӗрлнӗ те, кино тесе мунчана кӗрсе кайма тытӑннӑ.

Ҫутти ҫине пӑхнипе куҫӗ улшӑнса кайнӑ пуҫ.

ҪАХАЛ.

Тунтикун епӗ мунча хутрӑм,
Ытларикун мунча кӗтӗм,
Йункун сӗрӗм тивнипе выртрӑм,
Кӗҫнерникун пуҫ турарӑм,
Ернекун ыр ҫынсем ӗҫлемерӗҫ,
Шӑматкун ваттисенс асӑнчӗҫ,
Вырсарникун урамра ҫӳрерӗм,—
Ӗҫлемелле пулаймарӗ.

Сатачӑ.

Учрештенисене чӑвашлатма тытӑнни 2 ҫул ӗнтӗ. Вӑл хушӑра Чӑвашсойусӗ 84 слушӑшчинчен 55-шне вырӑслатма ӗлкӗрнӗ.

Мӗн вӑхӑтран Чӑвашсойусӗ пӗр чӑвашсӑр тӑрса йулаҫ?

Тапкӑ.

Çĕнĕ капкăнçă.

Пирĕн Йăван мучи „Капкăн“ туха пуçланăранпах, тĕрлĕрен йапала лектернипе мухтанаť. Кашни нумĕр çинех мĕн те пулин тытни çинчен çыраť. Ку йенчен вăл çеç ырă курса пурăнаť. Чăтаймасăр ĕнер пасарта укçана шеллемесĕрех пĕр тенкĕ парса йĕке хÿре капкăнĕ туйанса Кĕçĕн-Йелчĕк урамне лартса хутăм каçпала. Ирхине ирех мĕнте пулсан лекмен-ши тесе, капкăн патне чупрăм. Капкăн патне çитсе пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм: капкăна сăмсисемпе харăсах виçĕ çын лекнĕ; çитменнине пурте паллакан çынсен—Йелчĕкри укçа кивçен паракан йулташлăхра ĕçлекенсем. Пĕри Каткин, тепри Маркин, виççĕмĕш счетовот Аниçимăв, ĕлĕк чаплă уретник пулнăскер. Тапаланаççĕ мĕскĕнсем капкăнран вĕçĕрнесшĕн, тарласа йĕп-йĕпе пулса кайнă. Тапалансан тапалансан Каткин вĕçĕрĕнсе тарчĕ, лешсем иккĕшĕ хытăрах хĕсĕнчĕç сăмсисемпеле. Мĕнле хăйаматла килсе çаклантăр кунта? тесе ыйтрăм çаксенчен. Вĕсене виççĕшне те йĕркесĕр ĕçленĕшĕн йулташлăхран кăларса çирпĕтнĕ иккен, вĕсем самакункка шăршласа çÿренĕ чухне капкăна сăмсисемпе пырса çакланнă иккен. Маркăв йулташлахăн укçине виçĕ пин тенке йахăн хăй кăсийине куçарнă иккен. Аниçимăв самакункка мухмăрĕпе ĕçлеймесĕр йулташлăх ĕçне йапăхтарнă иккен, Каткинăн та пăртак хÿри вараланнă, тет, çапах та ăна капкăнран вĕçĕрĕнме май килнĕ иккен. Маркăвпа Аниçимăв халăх йунне сыпас йĕнчен пит паллă çынсем, вĕсене тата пичĕке пек пысăк хырăмĕсенчен иаллама пулаť. Çапла епĕ Йăван Мучипе ăмăртмалла капкăн лартса пĕр каçра икĕ шампа лектертĕм. Малашне те капкăн пушах ларме тесе шутлатăп.

„Кĕçăн Йăван Мучи“.

Кĕçĕн Йăван мучине хирĕç.

Хм-м-м!.. Мухтанаť, тет,
«Капкăна»çаклатнипе, тет.
Те чăн калаť вăл çав çын?
Те кĕвĕçесшĕн кăна, хăлын!
Каккуй манăн мухтанма халĕ!
Пĕтĕм пупĕ, чечукĕ, мĕн пур усалĕ,—
Кулакĕ-хăйамачĕ... шишкă травашĕ--
Пурте курайма ççĕ... çĕр çăташшĕ!...
Хм-м-м!... Мĕншĕн мухтанас, шăллăм?

Йăван Мучи.

„Капкăн“ кĕлеми.

— Чуччу-кассинчи (Йăлăмкас в.) вуламалли çурта пухăннă çынсене шывпа сирпĕтсе тата амашне асăнса пĕтерекен сăмахсемпе хăналантарма вĕреннĕ.

— Елпуç йалĕнче Улйанăвскри студент П. Ф. Иментайĕв, чейескер, ĕлĕк Хусанти Спаски манастирте манахла пурăннăскер, йала килсессĕн çамрăксемпе пĕрре те ĕçлемен. Токлатсем тума хушсан “мое тел сторона“ тесе хураť. Комсомол пуххисенчен хĕрсене: мĕн иглесе лармалла кунта тет те çÿреме йертсе тухса тараť. Çапах та çак чейе студент вулăсри РКП йачейккин чен йăпăлтатса, Иментай лайăх ĕçленĕ тесе хут илнĕ.

— Шĕнерпуç (Чутай вул.) копператтивĕн пĕр улшăнми пуçлăхĕ С. Петров копператтивĕн 50 тенкĕ таран уйăхне килекен тупăша хăйĕн хырăмне чикет. Ман пурнăç—улпут пурнăçĕ! тесе хырăмне çапни Шупашкарах илтĕнет. Хырăмĕ Шупашкарти Трйаплăвĕнчен ирте пуçларĕ. Копператтивра 25 член, нимĕн те шарлаймаççĕ. Пĕр «Шăши» çеç ревиçи тăвасшăн чĕриклетет.

— Хурамал вулăсĕнчи (Пат. у.) Чăрайкас йачейккинче Йаркай Савели Петĕр ывăлĕ Тимуш ĕçкĕрен ĕçне чупаť, авланаť, уйрăлаť çапла комсомолес йатне çĕнетег. Вăл халĕ купăсне çĕрçĕрĕн туртса çÿрет, вăрçаť хресне ашшĕне пуртăпа перет. «Капкăн» кĕлемипе те пуртăпа савалас тейĕ те, тем,—„перуйа çырнине пуртăпа саваласа пăрахаймăн“.

— Тĕлĕнмелле ку шуйтан „Капкăнĕнчен“. Ман аппарат пекех аппарат туса ӳкернĕ. Ман хушамата та пĕлеççĕ иккĕн. Ман формăллă аппарат урăх çук пуҫ тенĕ епĕ тĕнчере. Мурилештĕ!..

Йумăç патĕнче.

Ишекре Аҥҥук йатлă йумăç пур. Ун патне пуç çавăртарма ваттисем те, çамрăккисем те çӳреççĕ. Пурне те суйса йараТ.

(Çутçул йалкор).

— Калама та намăс та... Епĕ Çитăр улийа йуратса пăрахрăм. Пуç çавăрса парха.

— Миçе çулта эсĕ?

— Утмăл çула кайни нумай пулмасТ.

— 60 çулхисене пуç çавăрса пама хĕнтерех, çамрăкрах пулсан йӳнех çавăрма пулаТ. Пĕр сурăх пар.

— Йурĕ еппин. Ачамсем куричен сурăхне йатса килĕп.

Копператтивра.

Ревисор: Капла ĕçлесен сирĕн ĕç ăнмасТ. Сире укçа-тенкĕ тыткалаканĕ, хисепçи ĕçе пултараканрах çын кирлĕ. Вĕсене ĕç патне туртмалла.

— Виççĕ таранах вĕсем пирĕн патра ĕçлерĕç те...

— Ну, мĕн вара?.. Ĕç çапах тухмасТ-им?

— Пур пĕрех. Малтан вĕсене епĕр ĕç патне туртатпăр, кайран сут туртаТ.

Улхаш пурнăçĕ.

(Аслă çул çинче тупнă çыру).

Йулташăм! Сан çыруна илсен хĕпĕртерĕм. Мана манмашăн сана спаççипă. Халĕ хамăр Улхаш пурнăçĕ çинчен есĕ ыйтнă тăрăх çырса йарас терĕм.

Копператси пирĕн пур, лайăх ĕçлет. Кашни кун питрĕнсе ларать. Лапкинче 10 шăши, 3 крысса. Копператтивра ĕçлекенсем: аслисем—Акулинă патĕнче сăра ĕçеççĕ, кĕçĕннисем тавар турттараççĕ. Войнăвпа Паккарев Шĕмĕрлерен тавар илсе килнĕ чухне ĕçсе ӳсрĕлсе шăлт халăха тĕлĕнтерчĕç. Паккарĕвĕ урапа çинчен ӳсĕррипе ӳксе урапа айне пулса урине хуçнă. Войнăвĕн сахăрĕ çул тăрăх тăкăнса пынă, теççĕ. (Тен тăкăнман та пулĕ.) Халĕ Паккарĕв Чентросойусран поссопи илесшĕн çӳрет: пострадал са копператсийу, тет. Коракинпа Паťукин Акулинă патĕнче ĕçсе ӳсрĕлсен йалан пĕр пĕрин çине, лаша çине утланнă пек, ларса сĕтел тавра чупса çаварнаççĕ. Опщественнайа шись тоше лайăх. Кунта Ваççин йулташпа Паťтулин учитлĕ лайăх апществăшиç тунă. Çĕр прочăнĕпех вырсарни кун Акулинă патĕнче сăра ĕçсе ӳсрĕлсе кайран тимĕр шапа пек урам тăрăх тăватуран утаççĕ. Но ку опществă кашни кун çапла. Кăна нечехо пытарма, хам та ответ тытап перет кем укотно. Как опстойат вопросы урекулирований хосторковли тенине ăнланаймарăм. Темскер вăл. Но вçетак Хосторк пур пирĕн. Тоше ĕçме патăр. Ĕçсен вара лаша çине лараççĕ те тусан кăларса Шĕмĕрлене йараççĕ. Лаши çил пек вĕçет, косторксем кă ткăраççĕ—пĕр вырăнта тăрать, теççĕ. Вăрман хуçайстви патша чухнехи пек вăрман улпутне кĕрсе ӳкрĕ. Чернов йатлă. Хăйне товариш тесен, пĕтерет вара. Хоспотин парин, теме хушать. Ку вăрман хуçайстви. Унтан рапочее твишение çинчен. Рапочее твишение пырать, анчах Хосторк пухкалтĕрĕ пит усал, ĕçленĕ укçине час памасть. Йалан ыран, ыран, тет. Ыран çӳресе çур çул иртрĕ. Спаççипă ВИК поттершать турĕ рапочий твишенине. Пухкалтĕр укçине пачĕ. Хăратрăмăр. Ну йулташ, хут пĕте пуçларĕ. То çвитаңйа! Сколько хочешь. Пивной пирĕн те возвышаться тăвать. Тухховный оркестăр вырăнне Йакур пичче крамохвон калать. Сирĕн наркоматра вырăн çуки ман ваңңи?

Улхаш чăвашĕ Иванкка Петĕрĕ.

Çырса илекенрен. Ку çырăва аслă çул çинче иртен-çӳрен тупнă. Иртенçӳренрен «Капкăн» ретаксине ленкрĕ. «Капкăн» ку çырăва, Улхаш пурнăçне лайăх кăтартса панăран, нийепле те ăна çапмасăр чăтаймарĕ. Çыру хуçине Улхаш çинчен пĕлтернĕшĕн тав.

Капкăнçă.

Икĕ майлă Микул турă.

— Муçça пиче, аťаха пĕрре Ишеке кайар, йерçнĕ вăхăтра.

— Ишеке? Мĕн тума?

— Ара, Микул турра пуççапма.

— Айук! Утмастăп урăх Микул турă патне.

— Ма тата?

— Микул турă мана тарăхтарнă. Машенник! Турăи вăл?

— Ма апла калан? Çĕр çăтса йарĕ сана куншăн.

— Пĕркун Çитăрпа йатлаçнăчĕ. Тарăхнипе Ишекри Микул турă патне кайса 50 пуслăх çурта лартрăм: Çитăра ăçтатан пулин инкек пар, тесе. Вăл та Микул турă патне кайса 1 тенкĕлĕх çурта лартнă мĕн, мана инкек тутарасшăн. Вара ман ĕне ӳкрĕ. Урăх пуççапмастăп та ăна. Вăл кам укçа нумайрах парать, çавăн майлă. Мошенник!

Утик.

Чăвашла пĕлмен чăвашсем.

Чăваш чăвашла пĕлмест, теççĕ. Чăвашла пĕлменрен пуҫ Тăрăн йалсовечĕ (Мами вул.) çаран урлă кайакан çул йупи çине „тер. Туруновски лукам лесть сроко воспр. 3 рупля“ тесе çырса хунă. Ак вĕсен вывĕски.

Хура куçсем.

Сарă çÿçлĕ, йалтăр çавра хура куçлă куçсем вырăнсăрах çÿремеççĕ. Йапшăн пăхса илсенех вĕсене хĕрхенсе вырăн тупса паракансем тупăнаççĕ. Ав:

Йетĕрне уйесĕн 6 мĕш участкăри Халăх сучĕнче пуп хĕрĕ çыруçă ĕçне туса пурнаĭ. Комуниссене, комсомолĕссене кураймасĭ. Сутйин йалсене тухса кайсан, çав пуп хĕре кĕнчĕлере те ĕçлеме çуремест. Çитменнине тата вăл чăвашла та пĕлмест.

Хура куçсем илĕртесрен учрештени пуçлăхĕ пулса тăракан йулташсен хăйсен тавра тимĕр карта туса çаврăнмалла. Тимĕр карта урлă илĕртекен усал хаçаймасĭ, теççĕ ваттисем.

СĔНТĔР ВУРРИНЧИ АЧССР

Çак вывĕска Сĕнтĕр-вăрринчи пристăнĕ çине Атăл тăрăх иртсе çÿрекенсене пĕлтерме çапса хунă Ăнланмалла каласан вăл: «Сĕнтĕр-вăрринчи ахтономиллĕ чăвашсен Сотсиалисăмпа Совет Республĕкĕ» тени пулаĭ пулмалла. Халичен епĕр чăвашсен пĕр республĕк пуррине анчах пĕлеттĕмĕр, çак вывĕска вуласан Сĕнтĕр-вăрринче тепĕр республĕк пуррине пĕлтĕмĕр.

Сывă пулчăр чăваш республĕкĕсем!

Прахутпа иртсе пыракансем.

«Капкăн» ăнлантарса пани. Сĕнтĕр вăрринче хăйне ăрасна республĕк çук, есĕр калакан вывĕска унти «ахтономиллĕ чăвашсем» республĕкла выҫамалла çакса хунă пулмалла.

„Пирĕн криттĕксем“.

I.

Пĕр «криттĕк» çакăн пек сăвă шыраса тупаť:

„Шывсем шăнсан, йур çусан,
Çĕмĕрт çеçки сапакин
Шурĕ сăвĕ ман умра“.

«Криттĕк» çавна вулаť те, çапла çырса лартаť:

— Чăваш хăçан: «шывсем шăнсан», тет? Нихçан та каламасť (!)

Унтан «криттĕк» сăвăççене сăвăсем йепле çырмаллине вĕрентме тытăнаť. А. С. Пушкин çине перенçи пек пулаť. Анчах ку тĕлте вăл ытла шала кĕрсе кайаť. Сăмахран, «Русланпа Љутмилăна» Пушкин вырăслах çырнăтесе шутлаттăмăрчĕ епĕр ку таранччен. Çук, епĕр йăнăшнă иккен!

„Криттĕк“ çыраť:

...«вăл поемăна хађ вуласан пĕрре те вырăс чĕлхипе çырнă пек туйăнмасť», тет.

Епĕр ыйтасшăн: мĕнле чĕлхепе çырнă ăна Пушкин? Нимĕçле марши?

«Криттĕк» ун çинчен шарламасť.

(Примерсене „Ĕçл. сассин“ 16-мĕш № чен илнĕ).

II.

Тепĕр йышши «криттĕксене» Шупашкар петтехнĕккăмĕнче тупма пулаť. Акă вĕсен проттоккол коппинчен çырса илни:

... Техникумĕнчи „Канаш“ Сойус членсен 1925 çул. çу уйăхĕн 15-мĕш кунĕнче пулнă пухăвăн, Упа происветени тăрăх панă отсăв.

1... Претлошенисем вăрăм. „Те“ сойуса... нумай кĕртсе тултарнă...

3. Чăваш мĕскĕнĕсене лайăхрах кăтартайман, тĕрлĕрен классен çапăçĕвĕ (!) çинчен асăнса та пăхман,

4...„Арĕмĕ урапа çине апат пырса лартаť. Çăкăр касма упăшкине çĕçĕ шыраттараť“, тет. Пирĕн чăваш арĕмĕсем апатпа уйа кайаççĕ (килтен парса йама пултараймаççĕ иккен! Х.Ç.)

5. Хăш тĕлте искуствăннăрах çырни те пур. Вăтăр çул лаша пулманскерĕн, сухи, урапи, сӳри пурте пулнă (пулма пултарайман иккен! Х.Ç.)

7. Харсăр Кĕçтук чăваш типĕ мар... чăваш арçыннисем ĕçе хатĕрленсен, йе шухăша кайса йурлама, йе тата арĕмĕсене çĕçĕ тупса парса тăмаççĕ (!).

Çак отсăва йышăнасшăн 10 сас, хирĕç 3 сас.

Пуху пуçлăхĕ Н. Романăв.
Çыруçĕ Кассанков.
Çырса илекенĕ Хумма Çеменĕ.

Кĕнчелерте сăмахлани.

—Саветушчи йулташ, мана комунпайне кайса хватер укçи тӳлесе килме ирĕк парайăни?

— Мĕн пустуйшăн ĕçе пăрахса вăхăт иртерсе çӳремелле!

— Пустуй марха ку ĕç, хватер укçине уйăхран уйăха тӳлесе пымасан, вырăнти пӳтшета пулăшманни пулаť, тата намăс пек туйăнаť, тӳлевĕ те уйăха 2 т. 7 пус анчах.

— Есĕ шалу миçемĕш расретпа илеттĕнчĕха?

— Тăваттăмĕш расретпа.

— Апла пулсан санăн чăнах та халтерех тӳлемелле. Мана вунçичĕмĕш расретпе илекене, кăçалах черет çитес çукха. Унщăн шухăшласа пуçа çавăрма вăхăт çитменха. Кайса килех еппин.

«Пăшатан».

Врид. ответ. редактора **Алендеев.**

Чувашоблит № 1558. Чебоксары, Тип. „Чувашская книга“.